ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРЕЗИДЕНЧĔ Н.В.ФЕДОРОВ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

# ВĂХĂТА ХАКЛАМАЛЛА, ÇЫНСЕМШĔН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ



Хисеплĕ депутатсем, хаклă ентешĕмĕрсем!

Çĕр чăмăрĕн кирек хăш вырăнĕнче пурăнакан çыннăн ăс-тăн кăмăлĕ те çĕнĕ çул пуçламăшĕнче палăрмаллах улшăнать. Вăл миçерине тата мĕнле тĕн йĕркине пăхăннине пăхмасăр, календарлă çĕнĕ çула кĕме хатĕрленнĕ май, хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне яваплăхпа кĕтсе илнĕ пекех, малашлăх пирки оптимистла шухăшлама тăрăшать, хăйĕн ĕмĕчĕсемпе шанчăкĕсене куç умне кăларать, пурăнса ирттернĕ çулталăка хак парать.

I

Эпĕ те паян, республика аталанăвĕпе малашлăхне хам еплерех курнине сирĕн ума кăларнă май, малтан хамăрăн пĕрлехи вăйпа туса ирттернĕ хăш-пĕр ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлететĕп.

Иртнĕ çул Чăваш Еншĕн системăллă тата хăвăртлатнă экономикăллă, технологиллĕ, культурăллă аталану çулĕ пулчĕ. Çакна патшалăх статистики те, авторитетлă экспертсемпе пĕтĕм тĕнчери организацисен шухăшĕ те, федераци тытăмĕн ертӳçисем те çирĕплетеççĕ.

2006 çулта республикăра промышленность производствин индексĕ, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 15,9 процент чухлĕ «Раççейре – 4,2», çав шутра тирпейлекен производствăра 18,5 процент «Раççейĕпе – 4,6 процент» ӳснĕ.

Ял хуçалăх производствин продукцийĕсен калăпăшĕн ӳсĕмĕ 3,2 процентпа танлашнă «Раççейре – 1,5 процент». Çанталăкăн йывăр условийĕсене пăхмасăр, пухса кĕртнĕ пĕтĕм тыр-пулăн шайĕ 7,2 процент чухлĕ ӳснĕ «Раççейре - 0,4 процент чухлĕ чакнă», çĕр улми тухăçлăхĕ 2,3 процент чухлĕ ӳснĕ «Раççейре - 2,5 процент». Аш-какай туса илесси 4,1 процент чухлĕ «Раççейре – 4,3 процент», сĕт сăвасси – 6,3 процент «Раççейĕпе –0,3 процент» ӳснĕ. Республикăн агропромышленность комплексне 5,1 миллиард чухлĕ укçа-тенкĕ явăçтарнă «2005 çулхи кăтартуран 2,5 хут ытларах», çав шутран выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарма – 2 миллиард тенке яхăн. Тӳрех палăртса хăваратăп: 2007 çулта агропромышленность комплексне 8 миллиард тенкĕрен кая мар укçа-тенкĕ явăçтарма тĕллев лартнă.

Ялта пурăнакан 13 пине яхăн çемье хăйсен уйрăм хушма хуçалăхне аталантарма 1 миллиард та 812 миллион тенкелĕх çăмăллăх кредитне илчĕ, пурлăхне пуянлатрĕ. Раççей ял хуçалăх министрĕ Алексей Гордеев палăртнă тăрăх, çакă çĕршыври чи пысăк кăтартусенчен пĕри шутланать.

Бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстерес тĕлĕшпе тытса пыракан политика йĕркеллĕн пурнăçланса пырать «çак сферăра 130 пине яхăн çын, республикăри пĕтĕм халăхăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ, ĕçлет». Пĕлтĕрхи кăтарту ӳсĕмĕ 27,6 процентпа танлашнă. Çакă потребитель хакĕсем ӳссе пынин хăвăртлăхĕнчен палăрмаллах пысăк «8,4 процент чухлĕ, Раççейĕпе – 9 процент».

Çакă тата йышăннă ытти мерăсем халăх пурнăçĕн шайне çирĕппĕн ӳстерме май пачĕç. Халăхăн чăн тупăшĕ 22 процент чухлĕ, «Раççейĕпе – 11,5 процент», чăн ĕç укçи шайĕ вара 15 процент чухлĕ «Раççейĕпе – 13,4 процент» ӳсрĕç. Министрсен Кабинечĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен халăхăн ĕç укçийĕпе тупăшне малалла ӳстерес енĕпе тăрăшакансем тĕлĕшпе мерăсем йышăнас енĕпе активлăха, администраци пусăмне чакармалла мар, вĕсене хавхалантармалла. Кунта «пушă» та, «пĕремĕк» те усăллă пулассăн туйăнать.

Унпа пĕрлех пирĕн условисем туса памалла тата ял хуçалăхне пысăк технологисен никĕсĕ урлă индустриализацилесе, апат-çимĕç тата çăмăл промышленность предприятийĕсенче, стройкăсенче алă вĕççĕн пурнăçланакан ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесе ĕç тухăçлăхне ӳстерме тăрăшмалла.

Ĕçлекенрен хăйĕнчен те нумай килни çинчен пĕлтерсех тăмалла. Хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен, ăсталăх шайне пĕрмаях ӳстерсе пыракан, хăйĕн ĕçĕнче ăс-хакăл пултарулăхне аталантаракан ĕçчен предприятишĕн яланах хаклă «пур енĕпе те» çын шутланать, ытларах ĕçлесе илет. Унашкал майсем вара кашнийĕнех пур, уйрăмах çамрăксен: республикăра 7 пине яхăн ваканси. Рабочисем, строительсемпе инженерсем, класлă специалистсем кирлĕ. Мĕншĕн тесен предприятисенчен ытларахăшĕ производствăна çуллен миллиардшар тенкĕлĕх çĕнетет. Эпир нумай çурт-йĕр тăватпăр.

2006 çулта инвестици активлăхĕн хăвăртлăхне тивĕçтернĕ «тĕп капитала хывнă инвестицисен калăпăшĕ 117,5 процентпа танлашнă, Раççейĕпе – 112,8 процент». Çурт-йĕр тăвас ĕçре Чăваш Ен хăйĕн историйĕнчи 2005 çул тунă рекордлă кăтартăвĕнчен иртсе кайрĕ - 855,5 пин тăваткал метр çурт-йĕр хута янă. Пĕр çын пуçне 0,661 тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр тунă. Çак кăтарту Мордовипе Мари Эл республикисенчи, Чулхулапа Ульяновск облаçĕсенчи кăтартуран 2-3 хут, Мускавринчен тăваттăмĕш пай чухлĕ пысăкрах. Ку кăтартупа эпир Тутарстанран та «2005 çулта - 30, пĕлтĕр вара - 40 процент чухлех» малта пыратпăр. Çак кунсенче Тутарстанра пулса курнă федераци телеканалĕсен журналисчĕсем вара, ахăртнех, юбилей лару-тăрăвĕн тыткăнне лекнине пула, патшалăх статистикине шута илмесĕр, Тутарстана пурăнмалли çуртсем тăвас енĕпе çĕршывра никамран малта пырать тесе пĕлтерчĕç. 2006 çул тата республикăри сотовăй çыхăнăвăн абоненчĕсен шучĕ Чăваш Енре пурăнакан халăх йышĕнчен иртсе кайнипе те паллă пулчĕ. Федераци ертӳçисем наци проекчĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре пирĕн республикăна та тĕслĕхе хумалла кăтартса пама сĕнчĕç (тне пула Раççейре пĕлтĕр васкавлă медицина пулăшăвĕн машинисен паркĕ виççĕмĕш пай чухлĕ çĕнелнине мăнаçланса палăртаççĕ. Чăваш Енре вара вăл хамăрăн ĕçе тата Тĕнчери банкпа стратегиллĕ çыхăну тытнине пула 100 процента çитиех çĕнелнĕ.

Çулталăк тăршшĕнче республика бюджетне тӳрлетӳсем кĕртсе тăкаксен пĕтĕмĕшле калăпăшне 1,4 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳстернĕ. Пĕрлештернĕ бюджетăн тупăш никĕсĕ çулталăк тăршшĕнче 30 процента яхăн ӳснĕ - ку пысăк кăтарту, вăл инфляци шайĕнчен виçĕ хут пысăкрах. Чăваш Енри регионти пĕтĕм продукт ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕ иртнĕ çулсенчи пекех Раççейри вăтам шайран çӳллĕрех, хак панă тăрăх 107,5 процентпа танлашнă.

Çав хушăрах хамăрăн тупăш ӳсĕмĕ федераци бюджетĕнчен килекен укçа-тенкĕ калăпăшĕнчен икĕ хут иртсе кайнă. «Алăри аллă пус Мускаври мулран хаклăрах», - теççĕ халăхра. Эпир ку тĕлĕшпе ытти регионсенчен тухăçлăрах ĕçлетпĕр. Чăваш Енри налук вăйăмне ӳстермелли программа кăтартуллăн пурнăçланса пынă, çакă фискал политикине вăйлатнипе мар, экономика ӳсĕмĕпе тата тухăçлăхĕпе çыхăннă.

Уйрăм çынсен тупăшĕнчен тата пĕтĕмĕшле тупăшран, пурлăхпа тата çĕрпе усă курнинчен илекен налук шайĕ ӳснĕ. Çакă бизнес çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелес, вак предпринимательлĕхе аталантарас енĕпе активлă ĕçленипе пулчĕ, халăхăн тупăшĕ ифляциren малараx пычĕ.

Хамăрăн налук вăйăмне çирĕплетни тата бюджетсем хушшинчи хутшăнусенче хавхалантару механизмĕсемпе усă курни республикăра активлă социаллă политикăна тытса пыма май парать. Инвестицисен шайĕ вĕрентӳ ĕçĕнче - 21,2 процент, культурăра – 18,4 процент, сывлăх сыхлавĕнче – 3,1 хут, туризмпа спорт сферинче 3,5 хут ӳснĕ. Çак ĕçе граждансен ӳт-пĕвĕпе ăс-хакăлне çирĕплетес, çавăн пекех экономикăн конкурентлăхне ӳстерес тĕллевпе тунă.

Республикăри пысăк предприятисем управлени ĕçĕн çĕнĕ шайне тухрĕç, çакă вĕсене продукци кăларассине ӳстерме, Раççей потребитель рынокĕнче малти вырăнсене йышăнма кăна мар, компанисене капитализацилеме тата налук тӳлевне ӳстерме май пачĕ. Хушма инвестицисем хывма май паракан ăнăçлă политикăна тытса пыни предприятисен уçăмлăхне тата корпоративлă управлени ĕçĕн пахалăхне йĕркелет. Ку енĕпе хăйсен хаклă хучĕсене кăларнă «Промтрактор», «Шупашкар трикотажĕ», «Шупашкарти кайăк-кĕшĕк фабрики» чаплă та тухăçлă тĕслĕх кăтартса пачĕç. 9000 ИСО стандарта кĕртнĕ организацисен шучĕ 42 процент чухлĕ ӳснĕ, ку вăл республика промышленноçĕнчи пысăк тата вăтам организацисен хисепĕн 15 проценчĕпе танлашать, вĕсем тирпейлекен отрасльсен производство калăпăшĕн çуррине яхăн шайĕпе танлашать. Республикăри вĕрентӳ тата сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем те пĕтĕм тĕнчери стандартсене ĕçе кĕртме пуçларĕç, ку енĕпе агропромышленность комплексĕнче те тĕслĕхсем пур.

Пĕтĕм тĕнчери банкăн ушкăнĕ пулăшнипе фонд биржине Чăваш Ен 1 миллиард тенкĕлĕх патшалăх облигацине вырнаçтарчĕ. Çакă Пĕтĕм тĕнчери банк тӳрремĕнех, çĕршыв субъекчĕн правительствин гарантийĕсемсĕрех, финанс обязательствисен гаранчĕ пулма килĕшнин тĕнче практикинчи пĕрремĕш опычĕ. Ку республикăри власть тухăçлă, уçăмлă та яваплă ĕçленине, укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусемпе Чăваш Ене шанма пулнине çирĕплетет.

Standart & Poo'rs рейтинг агенствин Раççейри тата Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлешĕвĕнчи представительстви Раççей Федерацийĕн 81 субъектĕнче укçа-тенкĕпе усă курнине тата ăна тытса пынине хак панă. 5 çул хушшинче ирттернĕ пĕтĕмлетӳсем тăрăх Чăваш Республикине чи лайăх теçеткене шанчăклăн кĕртнĕ.

Çавăнпа та иртнĕ çул Moody's рейтинг агенстви, Чăваш Ен федерацин ытти субъекчĕсемпе танлаштарсан, наци виçипе те, пĕтĕм тĕнчери виçепе те кредита тавăрма пултараслăх пирки питĕ пысăк рейтинг йышăнни çинчен пĕлтернине тивĕçлĕ йышăнмалла. Хаклă хутсем кăларни вара çав рейтинга тепĕр карт çӳлерех хăпартнă.

II

Хисеплĕ депутатсем!

Темиçе çул каялла, реформăсене пуçланă тапхăрта, эпир республикăри пурнăçа лайăхлатма тăрăшни Чăваш Енре пурăнакансемсĕр пуçне урăх никама та кăсăклантарманнине тĕпе хунă. Эпир хамăрăн республикăна хăтлă, ăс-тăнлă пурнăçпа пурăнма тата интереслĕ те тухăçлă, тулли вăйпа ĕçлеме меллĕ тума тивĕç. Эпир хамăр тăвалла кайма пуçласан çеç пирĕнпе юнашар тăрас текенсем тупăнĕç. Халĕ Чăваш Енпе юнашар пулас текенсем нумайлансах пыраççĕ. Çакă республика тĕрĕс çулпа пынине çирĕплетекен чи лайăх тĕслĕх шутланать.

Çывăх вăхăтрах эпир Чăваш Республикин 2020 çулчченхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕн проекчĕпе ĕçлессине вĕçлетпĕр. Тата мĕнле тĕллевсене пурнăçа кĕртесшĕн-ха? Эпир, Чăваш Енре ĕçлесе пурăнакансем, 2020 çулччченхи малашлăхра тата мĕн пирки ĕмĕтленетпĕр?

Ман шухăшпа, республика социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче малтисен ретĕнче пырасси чăн малтанах, ĕçлесе пурăнмалли майлă условисем тунинчен, халăх пурнăçĕн пахалăхне тата ăс-хакăл çутлăхне ӳстернинчен; экономика ӳсĕмĕн хăвăртлăхне тивĕçтернинчен тата индустри хыççăнхи общество çине куçнинчен; тухăçлă ĕçлекен пайăр патшалăх партнерлăхне йĕркеленинчен килет.

Чăваш Республикин 2020 çулччченхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕн проекчĕн хăш-пĕр никĕс ориентирĕсене палăртса хăваратăп. Никама пăхăнман экспертсен хаклавĕпе тата Раççей Федерацийĕн Правительствин Ведомствăсен хушшинчи комисси пĕтĕмлетĕвĕпе асăннă проекта Раççейри чи лайăх проект тесе йышăннă. Эпир палăртса хунă ĕçсене пурнăçа кĕртсен 2020 çул тĕлне Чăваш Енре пĕтĕм регион продукчĕн калăпăшĕ, 2005 çултипе танлаштарсан, 2,6 хут, инвестицисен шайĕ 4,9 хут ӳсет. Халăхăн пĕр çын пуçне тивекен тупăш кăтартăвĕ 5,4 хут ӳсет. Çуллен 1 миллион та 400 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута ямалла, пĕр çын пуçне тивекен пурăнмалли лаптăкăн калăпăшĕ 21,6 тăваткал метртан 34,1 тăваткал метра çитмелле; пурăнмалли условисене лайăхлатас енĕпе черетре тăракансен шучĕ 55 пинрен 5 пине çити чакмалла. Ку вăхăт тĕлне Чăваш Ен чухăнлăха тĕппипех пĕтерме тивĕç. Часах çав документа эпĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пăхса тухма тăрататăп.

Наци аталанăвĕн стратегийĕ пирки калаçнă май, çак самант çинчен те каласа хăвармасăр юрамасть. Иртнĕ çул çĕршывăн политика тытăмĕн историйĕнче пĕлтерĕшлĕ пулăмпа вĕçленнине эсир пĕлетĕр. Чăннипех пуçласа ертсе пыракан парти съезчĕ ман куç умĕнче «Раççей парламентĕнче унăн представителĕсем ытларах пулнăран та, партипе Раççей Президенчĕ пĕр платформăра тăнăран та» Раççей пурнăçне тĕрĕс сăнарлакан программа йышăнчĕ. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» чăн ĕçсен партийĕ пулнине пĕлтерчĕ тата, ĕç тăвакан влаçăн бутафори хушăмĕ пулмасăр, çĕршывра пулса иртекен ĕçсемшĕн явап тытма хатĕррине çирĕплетрĕ.

Политика партийĕсем патшалăх парламентне, регионсенчи парламента тата муниципалитет органĕсене программăллă кăтартусен никĕсĕ çинче мар, лидерсен харизмĕ тата пур чухне те тасах мар политтехнологсен пулăшăвĕ çине таянса килессипе çыхăннă Раççей феноменĕ хыçа юлать. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» - суйлава çĕршыва аталантармалли тĕплĕ программăпа, класс кĕрешĕвĕ çинче мар, гражданла килĕшӳ идеологийĕн тата Раççей халăхĕн йăли-йĕркипе культурин тата ăс-хакăл туприн никĕсĕ çинче тăракан ăнланмалла стратегипе тухакан парти.

Çакăн пек условисенче Чăваш Ен халăхĕ хăйĕн Президенчĕ темиçе çул хушши принцип тĕлĕшĕнчен нихăш партипе те хутшăнманнине пĕлтерсе, çирĕппĕн каласан, парти çулне кăна мар, унăн стратегиллĕ çулне суйласа илнĕ йышăнăва тĕрĕс хак парасса шанатăп. Парти руководствинче мана сĕннĕ «политика кухнине» чăн хутшăнма май паракан статуса виççе пăхсан тата манăн Раççей халăхĕ ĕçлесе пурăнакан саккунсене «вĕсен витĕмĕпе çĕршыв е малалла аталанма, е шанчăксăррăн пĕр вырăнта чарăнса тăма пултарать» «пĕçерме» хутшăнма май уçăлнине шута илсен çакă, чăн малтанах, Чăваш Ен халăхĕшĕн стратегиллĕ. Эсир пĕлетĕр, хам пурнăçра эпĕ нихăçан та юхăма май ишмен, эпĕ ятарласа, тĕлли-паллисĕрлĕхе пĕлсе тăрсах юхăма хирĕç кăна ишекенсен йышĕнче те мар. Эпĕ яланах хам шухăшсемпе килĕшӳллĕн, ку должноçра вара XXI ĕмĕр Раççей историйĕнче Чăваш Ен ĕмĕрĕ пултăр тесе ĕçленĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» çывăх вăхăтрах чи малтан татса памалли виçĕ приоритетлă тĕллев çинчен пĕлтерчĕ: пĕрремĕшĕ - Раççей халăхне сыхласа хăварасси; иккĕмĕшĕ - Раççейре инновациллĕ экономика туса хурасси; виççĕмĕшĕ - коррупцие тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтересси тата патшалăхăн тухăçлăхне пĕтĕмĕшле ӳстересси.

Хăйне ытлашши шанакан çын пек курăнма хăрамасăр, вунă çул каярах Чăваш Енри власть шăпах çавăн пек программа çинчен пĕлтернине хăюллăн калама пултаратăп. Пĕлтернĕ кăна мар, ăна шанчăклăн тата тытăмлăн, тĕллевлĕ майсемпе ĕçе кĕртме тăрăшнă. Урăхла пулнă тăк пирĕн ĕç малалла кайман пулĕччĕ, эпир хамăртан чылай пуянтарах регионсенчен лайăх енĕпе уйрăлса тăракан кăтартусем патне çитеймен пулăттăмăр. Тата енчен те эпир, йăлана кĕнĕ пек, Раççей анлăхĕнче маларах иртсе ĕçлесе пытăмăр пулсан, паян вара уйрăмах федераци политикипе, Раççей Президенчĕн шанăçĕпе, наци проекчĕсемпе, «Пĕрлĕхлĕ Раççейпе» вăйланса - çав практикăна малалла та тытса пыма кăна мар, икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме тивĕç! Пĕлетĕп – эпир пултаратпăр!

Пĕрремĕш тĕллев çинчен. Пирĕн, чăвашсен, халăха сыхласа упрамалли технологийĕсем ансат та ăнланмалла пулнă. Эпир ăна ансат палăртрăмăр – çынна хывнă инвестицисем - çавна май пĕтĕм çынна, çав шутра пулас ăрусене те, кирлĕ общество инфратытăмне йĕркелес ĕçе пуçăнтăмăр. Çапах, политика енчен хаклас пулсан, питĕ нумай туса ĕлкĕртĕмĕр. Раççейри пурлăх тата укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пуян мар регионшăн халиччен пулман кĕске вăхăтра республикăри халăх пурăнакан пĕтĕм вырăна çут çанталăк газĕ çитертĕмĕр. Çакă ялсенче çурт-йĕр тăвас ĕçе ӳстерсе ячĕ, строительство комплексне ура çине тăратрĕ тата пĕр çын пуçне тивекен пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе нефть кăларакан субьектсенчен те иртсе кайма май пачĕ - эпир асăннă отрасльте нумай çул Раççейре малта пыракан виçĕ субьект шутĕнче. Эпир вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕн, культура тытăмĕсене пахалăхлăн çĕнетрĕмĕр. 140 çĕнĕ шкул, 137 ресурс центрĕ, 400 яхăн пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ, сывлăх сыхлавĕн специализациленĕ 12 центрне, тепĕр темиçе уйăхран 500-тен те иртсе каякан тĕслĕх библиотекăсен сетьне турăмăр.

Ача çуратассин кăтартăвĕ Чăваш Енре темиçе çул ĕнтĕ Раççейринчен лайăхрах, çын вилесси – сахалрах. Ача амăшĕсем, перинаталь тата кăкăр ачисем вилесси Европа çĕршывĕсен кăтартăвĕсемпе пĕр шайра. Ачасен тата çитĕннисен диспансеризацине ирттерме эпир чылай малтан, федераци шайĕнче йышăну тăвичченех пуçланă. Хальхи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсенче, çĕнĕрен туса хута янă республикăри медицина центрĕсенче провинцишĕн сайра шутланакан операцисем тăваççĕ, граждансем халĕ урăх хуласене тухса çӳремесĕрех пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илеççĕ, çавна май республика бюджечĕ укçа-тенкĕ перекетлет, ăна отрасле малалла çĕнетес ĕçе хывать.

Анчах та малашне медицина ĕçченĕсене татах та яваплă ĕç кĕтет, ун шайĕнче вĕсем пациентсен сывлăхне упрассине тивĕçтерсе çӳллĕ шайри професси ăсталăхне кăтартса пама тивĕç. Сывлăх сыхлавĕн сферинчи пулăшăвăн пахалăхне ӳстерес тĕллевлĕ «пилотлă» проекта ĕçе кĕртме, Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕпе Д.А.Медведевпа тата Раççей Федерацийĕн сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕпе М.Ю.Зурабовпа калаçса килĕшсе, Чăваш Ен валли пĕтĕмпе 702 миллион тенкĕ укçа уйăрма палăртнă: 421- федераци бюджетĕнчен тата 281- республика бюджетĕнчен.

Çав укçа стационарсенче тăрăшакан медицина ĕçченĕсене медицина пулăшăвĕн юлашки кăтартăвне тĕпе хурса хавхалантармалли тата кӳнĕ медицина пулăшăвĕн пахалăхне кура паракан хушма тӳлевсем валли те каять. Çавăн пекех уйрăмах ăнăçлă çитĕнӳсемшĕн - сиплевпе диагностикăри тата реабилитаци ĕçĕнчи çĕнĕ меслетсене ĕçе кĕртнĕшĕн грантсем параççĕ. Унпа пĕрлех пирĕн медицина пулăшăвĕн тата тăкакĕсен пĕтĕм йышне шута илессине тивĕçтермелле кăна мар, çакă финанс ресурсĕпе тухăçлăрах усă курма май уçать, чи пĕлтерĕшли – медицина персоналĕн çынсене кӳрекен пулăшу пахалăхĕшĕн яваплăхне ӳстермелле, çавăн пе-